28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮНЬ
29
ЭРНЕКУН
124 (6875) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Совет халăхĕн çĕнтерĕвне организацилекенĕ

СССР Верховный Совет Президиумĕ Сталин юлташа Совет Союзĕн Геройĕ ятне панине тата ăна иккĕмĕш хут «Çĕнтерӳ» орденĕ парса наградăласси çинчен кăларнă историллĕ Указсене совет халăхĕ çав тери хавхаланса кăмăллăн кĕтсе илчĕ. Ĕнер ССР Союзĕн хĕçпăшаллă мĕнпур вăйĕсен Верховный Главнокомандующине Сталин юлташа пирĕн çĕршыври чи аслă çар званийĕ—Совет Союзĕн Генералиссимусĕ ятне панă. Çак ята ăна вăрçă вăхăтĕнче государствăн мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе Тăван çĕршыв умĕнче тунă уйрăмах чаплă ĕçсемшĕн панă.

Пирĕн çĕршыв халĕ çĕнтерӳ мухтавĕпе уявĕ тапхăрĕнче пурăнать. Гитлерла Германие хирĕç пынă вăрçăра совет халăхĕ тунă çĕнтерӳ хăйĕн пĕлтерĕшĕ тĕлĕшпе тĕнче историйĕнче чи паллă вырăн йышăнса тăрать.

Халĕ ĕнтĕ пурте çакна йышăнаççĕ: Октябрьти социализмлă революцие пула кăна, çĕршыва тĕпренех социализмла урăхлатса çĕнетнине пула кăна, çак вăрçăра пирĕн çĕршыв татса паракан тĕп вăй пулса тухма пултарчĕ. Çак вăй ĕнтĕ германи çар машинине аркатса пĕтерсе лартрĕ. Çĕнтерӳ ĕçĕшĕн çав тери пысăк жертвăсем тунă совет халăхĕн паттăрлăхĕпе хăюлăхĕ умĕнче мĕнпур ырă шухăшлă кăмăллă этемлĕх пуç таять. Ирĕклĕхе юратакан халăхсен хаяр тăшманне хирĕç кĕрешнĕ чухне совет халăхĕ çав тери мухтавлă та паттăр ĕçсем турĕ.

Пĕтĕм тĕнчери мĕнпур чĕлхесемпе халĕ пĕр ята, пĕр çынна, миллионшар совет çыннисен таса та паттăр кĕрешĕвне ертсе пынă çынăн ятне ăшшăн асăнса калаççĕ. Çак ят вăл — сталинла виçĕ пилĕкçуллăх хушшинче пирĕн çĕршыва тĕпренех улăштарса никам çĕнтерейми çĕршыв тăвас тĕлĕшпе творчествăллă хăватлă ĕçе ертсе пынă çулпуçăн ячĕ, герой-халăхăн, çĕнтерӳçĕ-халăхăн ăслăхне, хăюлăхне, наука тĕлĕшĕнчен тĕп-тĕрĕс шутласа хунине тата паттăрлăхне пĕрлештерсе тăракан çулпуçăн ячĕ.

Çак ят вăл—Сталин.

Хальхи вăрçă пуçланаччен чылай малтан, нимĕç империалисчĕсем ССР Союзĕ çине тапăначчен чылай малтан Сталин юлташ ĕç мĕнле пулса пырассине курса тăнă. Вăл пирĕн халăха хамăрăн Совет Тăван çĕршыва хӳтĕлеме хатĕрлерĕ. Хĕрлĕ Çара çитĕнтерсе вăйлатса пычĕ, вăрçă вăхăтĕнче тăшмана аркатса тăкма кирлине пурне те парса тăма пултаракан хăватлă индустри тăвас ĕçе ертсе пычĕ, хресченсене колхоз çулĕ çине тăратрĕ, çакă ĕнтĕ пирĕн çара тата çĕршыва выçлăхран, чĕртавар çитменнипе аптăрассинчен çăлса хăварчĕ. Вăрçă пуçланаччен нумай малтан Сталин юлташ совет çыннисене Тăван çĕршыва чун-чĕререн парăнса ĕçлеме, хăюллă та хастарлă пулма вĕрентрĕ.

Тăватă çул каярах, пирĕн Тăван çĕршывăн чи йывăр пулнă кунсенче, темĕн чухлĕ çар техникипе хĕçпăшалланнă урса кайнă нимĕç захватчикĕсем пирĕн совет çĕрĕ çине вăрă-хурахла тапăнса ирсĕррĕн çĕмĕрсе кĕнĕ вăхăтра, пирĕн Тăван çĕршыв, ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем вилĕмлĕ хăрушлăх умне пырса тухрĕç.

Çак хăрушă та хаяр кунсенче пирĕн паттăр халăха ертсе пыракан паттăр çулпуçăн лăпкă та шанчăклă сасси илтĕнсе кайрĕ. Сталин юлташ пирĕн таса çĕршыв çине тапăннă сĕмсĕр те ирсĕр тăшмана эпир пурĕ пĕр аркатса тăкăпăр, тесе малтанах çав тери генилле каласа пачĕ. Вăл пĕтĕм халăха çĕнтерӳ тумалли çула кăтартса пачĕ, пирĕн тĕрĕс ĕç пурĕпĕр çĕнтерессине шанчăклăн ĕнентерсе каларĕ. Вăл çĕнтерӳ ячĕпе кашни совет çыннине хăйĕн мĕнпур вăйне хурса ĕçлеме чĕнчĕ, тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçе пирĕн социализмлă государствăн улăпла вăйĕсене çĕклерĕ. Вăрçăн чи йывăр кунĕсенче пирĕн çулпуçĕ тата учитель, генилле стратег вăрçă ĕçĕсене ертсе пырассин мĕнпур йывăрлăхĕсене хăй çине илчĕ.

Совет халăхĕн вăйлă та чее тăшмана хирĕç пынă кĕрешĕвĕн программине Сталин юлташ малтанах питĕ ăслăн палăртса хучĕ. Хальхи вăхăтри вăрçăн законĕсене вăл генилле тĕрĕс ăнлантарса пачĕ. Сталин юлташ историре ку таранччен пулман кĕрешӳри çĕнтерĕве ăнсăртран пулакан, вăхăтлăх факторсем мар, яланах ĕçлесе тăракан, татăклă факторсем пирĕн вăйлă татса парассине кăтартса пачĕ.

Аслă Сталинăн генилле планĕпе генилле стратегин никĕсĕнче вăл халăха чун-чĕререн ĕненни, совет стройĕн условийĕсенче унăн улăпла творчествăллă вăйĕсем çине шанни тăрать. «Пирĕн вăй-хăват ĕмĕрне иксĕлми нумай. Мăнкăмăлланса сĕмсĕрленнĕ тăшман ăна часах курса ĕненĕ»,—терĕ Сталин юлташ 1941 çулхи июнĕн 3-мĕшĕнче.

Хĕрлĕ Çарăн хăватне, халăх хăватне—хальхи вăрçăра чи татăклă факторсенчен пĕри пулса тăракансене—Сталин юлташ çав тери çӳле çĕклерĕ. Вăрçă характерне ăнлантарса парса, пирĕн ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхшăн, Октябрьти социализмлă революцин аслă çĕнтерĕвне хӳтĕлесеншĕн пынă çак тĕрĕс вăрçăн таса та çӳллĕ тĕллевĕсене совет воинĕсем умне кăларса тăратса, Сталин юлташ халăха ĕмĕрне курман паттăрла ĕçсем тума хавхалантарчĕ. Совет çыннисем хăйсем мĕншĕн кĕрешнине пĕлсе тăчĕç. Пирĕн асаттесен мухтавлă ĕçĕсем вĕсене паттăрла ĕçсем тума чĕнсе тăчĕç, вĕсене аслă Ленинăн сăнарĕ хавхалантарса пычĕ.

Совет çыннисене паттăрла шутсăр нумай ĕçсем тумашкăн Сталин юлташăн примерĕ хавхалантарса чĕнсе пычĕ. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах Сталин юлташ хăй çине çав тери пысăк йывăрлăхсем илчĕ. Çав йывăрлăхсене ăнăçлăн татса пани ĕнтĕ пирĕн Тăван çĕршывăн, миллионшар çынсен кунçулне, пирĕн пулас ăрăвăн кунçулне татса пачĕ.

Мускав çывăхĕнчи çапăçусенче, пирĕн Тăван çĕршыва хӳтĕлес ĕçĕн чи йывăр та хăрушă кунĕсенче, совет полководецĕн аслă ăслăхĕ унăн героизмĕпе, çав тери пысăк хăюлăхĕпе пĕтĕçсе пычĕ. Германи çарне пирĕн Тăван çĕршывăн столицин—Мускав хулин хапхи умĕнче аркатса тăкмалли сталинла стратегин планĕ, обстановкăна наука тĕлĕшĕнчен тарăннăн анализ туни çинче никĕсленсе тăракансскер, шăпах ĕнтĕ хăюлăхпа, паттăрлăхпа уйăрăлса тăрать. Çак кунсенче кунта, Мускавра яланах Сталин юлташ, хăйĕн хăватлă та мухтавлă соратникĕсен ушкăнĕпе пĕрле пулнă.

Çав вăхăтра, вăрçă çулăмĕ Мускав стени çумĕнче, Росси центрĕнче, çĕршывăн чĕри çывăхĕнче ялкăшнă вăхăтра мĕнпур тĕнче çав историллĕ çапăçăва пăхса сăнаса тăчĕ. Тăшман çĕнтерӳ уявĕ тума хатĕрленнĕ. Вăл хăйĕн ялавĕсене Мускаври Хĕрлĕ площадь тăрăх йăтса çӳреме ĕмĕтленнĕ. Анчах та çав вăрă-хурахла ялавсен кунçулĕ урăхла таталчĕ. Вĕсене Хĕрлĕ Çарăн историллĕ Çĕнтерӳ парачĕ пулнă кун аслă Ленинăн Мавзолейĕ патне çĕр çине пăрахса таптанă.

Совет çыннисен паттăрлăхĕ, Хĕрлĕ Çарăн паттăрлăхĕ, пирĕн полководецăн паттăрлăхĕ захватчиксен çулĕсене пӳлсе лартрĕ. Мускав çывăхĕнче тăшмана хирĕç малтанхи хут аслă çапăçу пулса иртрĕ. Çак çапăçура ăна хальхи вăрçăра чи малтанхи хут аркатса тăкнă.

Сталин юлташăн стратегиллĕ генийĕ, полководецăн паттăрлăхĕ, вăл кирек епле пулсан та Мускава хӳтĕлесе хăварма кирли çинчен, унчухне хăйсен ăнăçăвĕсемпе мăнаçланнă гитлеровецсен вăйлă та хăрушă çарне аркатса тăкма кирли çинчен хăюллă, харсăр та паттăр решени йышăнни,—çаксем ĕнтĕ нимĕçсен ирсĕр шухăш-ĕмĕчĕсене аркатса тăкрĕç, çакă ĕнтĕ тăшман вĕçĕмсĕр парăнса пынин пуçламăшĕ пулса тăчĕ.

Совет çыннисем фронтра та, тылра та Сталинăн ятне асăнса кĕрешрĕç, çав тери пысăк, çĕнтерме çук пек курăнакан йывăрлăхсене çĕнтерчĕç. Сталин юлташ, Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ, халăхăн паттăр мĕнпур кĕрешĕвне куллен-кун хăй ертсе пычĕ. Пĕр совет çĕршывĕнче кăна, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе тăванла халăхсем творчествăллă аслă çулпа аталанакан çĕршывра кăна, ĕçре çакăн пек тĕлĕнмелле паттăрлăхпа хастарлăх кăтартса пама пулать.

Сталин юлташпа унăн çывăх соратникĕсем кунĕн-çĕрĕн тунă организаторла ĕçĕ—дивизисен хисепĕсене, çарăн хĕçпăшалне нумайлатса лайăхлатасси пулнă. Çак факторсем ĕнтĕ вăрçа пирĕн çĕнтерӳпе вĕçлерĕç. Тăван çĕршывăн тылри районĕсенче сталинла воинсен дивизийĕсене вĕрентсе хатĕрлесе пынă.

Çав вăхăтрах вĕсене валли хальхи вăхăтри чи çĕнĕ те хăватлă хĕçпăшал тутаса кăларнă. Конструкторсемпе академиксем, инженерсемпе техниксем Хĕрлĕ Çар валли самолетсем, танксем, тупăсем, автоматсем, гвардеецсен миномечĕсене тума хатĕрленĕ. Вĕсен творчествăллă ĕçне Сталин юлташ куллен-кун хăй ертсе пычĕ. Вăрçă вăхăтĕнче наукăпа техника тунă аслă çитĕнӳсем пурте Сталин юлташăн ячĕпе таччăн çыхăнса тăраççĕ. Аслă Сталинăн заданийĕсемпе хавхаланнă миллионшар рабочисем ырми-канми ĕçлерĕç.

Паттăр Хĕрлĕ Çарăн улăпла вăйĕ çулран çул ӳссе çирĕпленсе пычĕ. Аслă полководец Сталин юлташ паллă генералсемпе маршалсене, Сталинăн стратегиллĕ шухăшĕсене, Верховный Главнокомандованин заданийĕсене талантлă пурнăçа кĕртнĕ генералсемпе маршалсене вĕрентсе çитĕнтерчĕ. Çарти офицерсен организаторла пултарулăхĕ вăрçа татса паракан факторсенчен пĕри пулса тăрать. Отечественнăй аслă вăрçăн летописĕ ĕнтĕ сталинла çар наукин шкулĕнчен вĕренсе тухса, вăрçă вут-хĕмĕ витĕр тухнă пирĕн çарăн генералĕсемпе офицерĕсен çав тери тĕлĕнмелле ӳсĕмĕ çинчен каласа парать.

Сталин юлташ пирĕн çĕршыва çирĕппĕн, нимĕн пăркаланмасăр çĕнтерӳ патне ертсе пычĕ. Вăл вăрçă уйхирĕнче çапăçакан çынсен вăй-хăвачĕ мĕнрен килнине тĕплĕн шута илсе пычĕ. Совет державин демократиллĕ мĕнпур çĕршывсемпе çыхăну тытасси çирĕпленсе ăнăçлăн аталанса пычĕ. Тулашри политикăна Сталин кăтартнă пек тытса пыни гитлеризма хирĕç тунă коалицие вĕçĕмренех çирĕплетме, фашистла Германие ерипенех ытти çĕршывсенчен уйăрса пыма май пачĕ.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех пирĕн çĕршыв çак вăрçăри хăйĕн таса тĕллевĕсене Сталин юлташăн сăмахĕпе çакăн пек кăтартса пачĕ. «Паянтан пуçласа Европа çинче халăхсен ирĕклĕхĕн тата халăхсем хăшшинчи мирĕн аслă ялавĕ ялкăшса тăрĕ». Çапла каларĕ Сталин юлташ аслă Çĕнтерӳн хаваслă кунĕнче, пирĕн улăпла кĕрешĕвĕн итогĕсене тунă май. Çак сăмахсем мухтавлă та çав тери таса. Сталин юлташ ертсе пынипе Совет Союзĕ мирпе хăрушсăрлăхăн хăватлă тĕрекĕ, халăхсен демократин тата прогрессăн, ирĕклĕхĕн тĕрекĕ пулса тăчĕ.

Сталинăн çĕнтерӳ тума вĕрентекен стратегийĕ—вăрçă генийĕн питĕ аслă ĕçĕ пулса тăрать. Вăл общество аталанăвĕн законĕсене наука тĕлĕшĕнчен тĕрĕс пĕлни çинче, марксистла-ленинла теори çинче никĕсленсе тăрать. Вăл вăрçă ĕçĕнчи мĕнпур лайăх çĕнтерӳсене, чи малтанах вырăссен вăрçă искусствинчи питĕ паллă çĕнтерĕвĕсене тĕплĕн вĕренсе пыни çинче никĕсленсе тăрать. Вăл темĕн тăршшĕ тăсăлса выртнă фронтсенче, аякри тылра, ют çĕршывсенче, тăшман лагерĕнче пулса иртнĕ мĕнпур явленисене пĕтĕçтерсе пырать. Вăл халăхăн мĕнпур вăйĕпе талантне шута илни çинче, социализмлă строй вăхăтĕнче халăх мĕн-мĕн тума пултарнине шута илни çинче никĕсленсе тăрать.

Сталин юлташ хальхи вăхăтри çар наукине турĕ. Вăл хальхи вăхăтри çар техникин пур тĕрлĕ отраслисене те питĕ тĕрĕс хакларĕ, Сталин юлташ тăшмана тĕреклетнĕ фронтсенче, уçă вырăнсенче мĕнле пĕтерсе тăкмаллине тĕплĕн вĕрентсе пычĕ. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче тăшманăн çарĕсене хупăрласа пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе çав тери паллă та пысăк операцисем пулса иртрĕç.

Паттăр Хĕрлĕ Çар çак вăрçăра тунă мухтавлă ĕçсем вăрçă ĕçĕнче ку таранччен пулнă мухтавлă пур тĕслĕхсене те хупласа лартаççĕ. Совет воинĕсем тăшманăн вăйне вут-хĕмпе тата тимĕрпе аркатса Атăл çыранĕнчен пуçласа Альпа тăвĕсем патне çитрĕç. Ĕмĕр-ĕмĕр юрпа хупланса тăракан ту тăррипчен пирĕн улăп геройĕсем çине, хăйсен паттăрлăхĕпе ашшĕсемпе аслашшĕсенчен те мала тухнăскерсем çине Росси воинствин мухтавлă Генералиссимусĕ А. В. Суворов пăхса тăчĕ.

Çакăн пек çапăçусем ку таранччен урăх пулман. Сурçĕрти пăрлă тинĕссенчен пуçласа кăнтăрти ăшă тинĕссем патне çити тăсăлса выртнă фронт тăршшĕнче çав тери пысăк та хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Совет маршалĕсем походсем туса фронтсемпе армисене ертсе пычĕç. Çак походсем кашниех ĕлĕкхи вăхăтра пулнă мĕнпур кампанисенчен пысăкрах. Маршалсене вара çĕнтерӳ патне совет халăхĕн аслă çулпуçĕ, генилле полководец И. В. Сталин ертсе пычĕ. Тăван çĕршыв хăйĕн чи паттăр та мухтавлă воинне тивĕçлипе хисеплесе ăна çарти чи аслă звани — Совет Союзĕн Генералиссимусĕ ятне пачĕ. Çакăнпа ĕнтĕ совет халăхĕ вăл вăрçă вăхăтĕнче государствăн мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене ертсе пырас тата пире çĕнтерӳ патне илсе çитерес тĕлĕшпе Тăван çĕршыв умĕнче уйрăмах чаплă ĕç тунине ĕмĕрлĕхе палăртса хăварчĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр тапхăрта ССР Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен пуçне, совет государствин пуçне аслă шухăшсен çыннийĕ, организаторĕ, стратегĕ, хăйĕнче совет халăхĕн геройзмне пĕтĕçтерекенскер, тăни совет халăхĕн пысăк телейĕ пулать. Сталин юлташа Совет Союз Геройĕн ятне панине, ăна иккĕмĕш хут «Çĕнтерӳ» орденĕ парса наградăланине совет халăхĕ çав тери хавхаланса кăмăллăн кĕтсе илчĕ. Çакă ĕнтĕ халăхăн шухăш-кăмăлне каласа пани пулчĕ.

Халăхсен çулпуçне тата учителе, пирĕн хăватлă государствăна тăвакана, социализм çĕршывĕн генилле стратегне—Совет Союзĕн Генералиссимусне И. В. Сталина мухтав!

Нумай çул пурăнма, сывлăхлă та вăйлă пулма сĕнет совет халăхĕ Сталин юлташа! Унпа пĕрле, вăл генилле ертсе пынипе, эпир историре ку таранччен пулман вăрçăн çилтăвăлĕ витĕр тухрăмăр. Унпа пĕрле, вăл ăслăн ертсе пынипе, совет халăхĕ совет государствин вăрçăри тата экономикăри вăй-хăватне малалла çирĕплетес тĕлĕшпе, хамăрăн Тăван çĕршыва малалла чечеклентерес тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнӳсем тăвĕ!

(«Правда» хаçатăн июнĕн 28-мĕшĕнчи умстатьи).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чи аслă çар званийĕ—Совет Союзĕн Генералиссимусĕ ятне тăвасси çинчен

Чи аслă çар званийĕ — СОВЕТ СОЮЗĔН ГЕНЕРАЛИССИМУСĔ ятне тăвас, ăна вăрçă вăхăтĕнче государствăн мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене ертсе пырас ĕçре Тăван çĕршывăшăн çав тери чаплă ĕçсем тунăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕ кашни çынна хăйне уйрăм парать.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ М. КАЛИНИН.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН СЕКРЕТАРĔ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 26-мĕшĕ.



СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне Иосиф Виссарионович Сталина „Çĕнтерӳ“ орденĕпе наградăласси çинчен

Совет Союзĕн мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене организацилес тĕлĕшпе çав тери чаплă ĕçсем тунăшăн тата вĕсене гитлерла Германие пĕтĕмĕшпе çĕнтернипе вĕçленнĕ Отечественнăй аслă вăрçăра пĕлсе ертсе пынăшăн Совет Союзĕн Маршалне Иосиф Виссарионович **Сталина „Çĕнтерӳ“** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 26-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Иосиф Виссарионович Сталина Совет Союзĕн Геройĕ ятне парасси çинчен

Пирĕн Тăван çĕршыва тата унăн столицине Мускава хӳтĕленĕ йывăр кунсенче Хĕрлĕ Çара ертсе пынă, гитлерла Германие хирĕç пынă кĕрешĕве çав тери паттăррăн та хăюллăн ертсе пынă Совет Союзĕн Маршалне Иосиф Виссарионович **Сталина Ленин орденĕпе „Ылтăн Çăлтăр“** медаль парса, **Совет Союзĕн Геройĕ** ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 26-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

ССР Союзĕн мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховный Главнокомандующине Иосиф Виссарионович Сталина чи аслă çар званийĕ—Совет Союзĕн Генералиссимусĕ ятне парасси çинчен

ССР Союзĕн мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховный Главнокомандующине Иосиф Виссарионович **Сталина** чи аслă çар званийĕ—**Совет Союзĕн Генералиссимусĕ** ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июнĕн 27-мĕше.

Докладчиксемпе агитаторсем валли

ХАЛĂХ СЫВЛĂХНЕ СЫХЛАС ĔÇРИ ÇИТĔНӲСЕМ

А. ЛИХАЧЕВ.
Чăваш АССР Сывлăх Халăх Комиссарĕ

Чăваш республики хăй 25 çул пурăнса иртнĕ хушăра, халăх хуçалăхĕпе культура ĕçĕсенчи пекех, сывлăха сыхлас ĕçре те пысăк çитĕнӳсем турĕ. Партипе правительство халăх сывлăхĕшĕн, медицина кадрĕсене пăхса çитĕнтерессишĕн куллен тимлĕн тăрăшаççĕ. Пирĕн медицина кадрĕсем, тĕпрен илсен, Октябрьти Социализмлă аслă революци хыççăн совет влаçĕн çулĕсенче ӳссе çитĕннĕ. 1920 çулта Чăваш республикинче пурĕ 22 врач кăна, вĕсенчен чăвашсем пĕр-икĕ çын кăна пулнă пулсан, 1941 çул тĕлне вара врачсен хисепĕ 337 çынна çитрĕ, вĕсенчен чăваш врачсем 152 çын. Медицинăн вăтам работникĕсем 98 çын пулнă пулсан, халĕ вара вĕсем 1454 çын шутланаççĕ, вĕсенчен чăвашсем 987 çын. Кунсăр пуçне, трахсестрасем 545 çын пур, вĕсенчен чăвашсем—515 çын.

Медицинăн вăтам работникĕсене республикăри медицина шкулĕсенчен нумай вĕрентсе кăларнă, вăл шутран: фельдшерсем—1224 çын, медсестрасем—852 çын, акушеркăсем—587 çын.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçлансан, республикăри медицина работникĕсенчен 147 врач тата медицинăн вăтам работникĕсем питĕ нумайăн фронта тухса кайрĕç. Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре вĕсем хăйсен тивĕçлĕхне чыслăн пурнăçа кĕртсе пычĕç.

Хĕрлĕ Çарăн аманнă боецĕсемпе командирĕсене сыватас тесе вăйа хĕрхенмесĕр ĕçленĕшĕн эвакогоспитальсенчи тата сыватакан ытти учрежденисенчи чылай работниксене Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. ССР Союзĕн Наркомздравĕ медицина работникĕсенчен 59 çынна «Отличник Здравоохранения»—значекпа наградăланă. 139 çынна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине панă. Медицина работникĕсенчен чи палăраххисем А. С. Чемолосов профессор, А. П. Ананьев, Л. М. Архангельская врачсем—Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ, П. М. Стельмашонок доцент—Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ, П. И. Сапожков доцент—«Знак почета» орденĕ илме тивĕçлĕ пулчĕç. Сывлăха сыхлас ĕçре тава тивĕçлĕ паллă ĕçсем тунăшăн А. И. Ананьев, Н. М. Кузнецов, В. С. Обухов, Л. М. Архангельская, М. И. Иевлев, П. С. Кафтанников тата М. В. Покровский врачсем РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕн ятне илчĕç. Хăйсен ăсталăхĕпе пĕлӳлĕхне ӳстерес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлесе, Е. С. Комиссарова, А. Ф. Фадеева, И. М. Кузнецов, П. П. Осипов, Г. А. Гутман тата П. Н. Журин врачсем медицина науки кандидачĕн ученăй степенне илчĕç.

Чăваш республикинче сыватакан учрежденисен хисепĕ çулран çул ӳссе пычĕ. 1920 çулта пирĕн республикăра пурĕ 23 больница пулнă, вĕсенче 897 койка вырнаçса тăнă. Халĕ пирĕн 58 больница пур, вĕсенче 2404 койка вырнаçса тăрать. 1920 çулта пирĕн поликлиникăсем пулман, халĕ 5 поликлиника, 73 амбулатори ĕçлет. 1920 çулта 21 фельдшер пункчĕ пулнă пулсан, халĕ пирĕн 170 фельдшер пункчĕ пур, фельдшерпа акушер пункчĕсем 1920 çулта пачах та пулман, халĕ 44 пункт пур.

Сыватакан учрежденисен йышĕ çаван пек вăйлăн ӳссе пыни пирĕн партипе правительство чăваш халăхĕн сывлăхĕшĕн çав тери тимлĕн тăрăшнине кăтартса парать.

Кунсăр пуçне, çынсене тĕрлĕ чирсенчен сыватмалли специальнăй учрежденисем — тубдиспансерсем, вендиспансерсем, трахом институчĕ тата поликлиникăсенче пур тĕрлĕ специальноçсем тĕлĕшпе ĕçлекен кабинетсем организациленĕ. Çаван пекех пирĕн пур тĕрлĕ специальноçсемпе ĕçлекен врачсем те ӳссе çитĕнчĕç. Сыватакан учрежденисен йышĕ тата медицина кадрĕсен ăсталăхĕ ӳссе пынине пула, халăха врачсем енчен пур тĕрлĕ пулăшу та пама май пулса тăчĕ.

Чăваш республикинче сывлăха сыхлас ĕç валли тухакан расходсем хăвăрт ӳссе пычĕç. 1922 çулта çав ĕç валли государство 53.4 пин тенкĕ расходланă пулсан, 1944 çулта 22.864 пин тенкĕ расходланă, 1945 çулта вара—36.105 пин тенкĕ расходлама палăртнă.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче медицина работникĕсен ответлăхĕ уйрăмах пысăкланчĕ. Вĕсем, пуринчен малтан, чи хисеплĕ задачăна—Хĕрлĕ Çарăн аманнă боецĕсемпе офицерĕсене сыватас задачăна пурнăçа кĕртме хĕрӳллĕн тытăнчĕç. Пирĕн правительство госпитальсем валли чи лайăх çуртсене, чи паха оборудованисене, врачсен чи ăстарах кадрĕсене уйăрса пачĕ.

Партипе правительство куллен тимлĕн тăрăшни медицина работникĕсене ĕçре вăйлăн хавхалантарса пычĕ. Вĕсем эвакогоспитальсен ĕçĕнче, аманнă боецсемпе офицерсене сыватас ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕç. Вĕсенчен уйрăмах госпиталь начальникĕсен Ефимова, Гриншпнут, Жаркова, Ливак, Соколов юлташсен, тата паллă хирургсен Селютин, Рутштейн, Пиковенко, Рябушкина, Захаров тата ытти юлташсен ĕçĕсене палăртмалла. Аманнисене сыватас ĕçре вĕсем çĕнĕ меслетсемпе анлăн усă курса пычĕç. Пирĕн госпитальсенче сывалакан воинсенчен 65,8 проценчĕ лайăх сывалса çитсе, Хĕрлĕ Çар ретне таврăннă.

Патша Российĕ санитари тĕлĕшпе чи кая юлнă çĕршывсенчен пĕри пулнă. Тĕрлĕ ерекен чирсемпе çулсерен кашни 10.000 çынран 63 çын вилнĕ. 1916 çулта питĕ ерекен чирсемпе 1,5 миллион çын чирленине палăртнă, вĕсенчен чечче чирĕпе 114 пин çын чирленĕ.

Октябрьти Социализмлă аслă революцийĕ Российăн пĕтĕм социаллă-экономикăллă пиkĕсне урăхлатса çĕнетрĕ, ĕççыннисене сывă пурăнса ĕçлеме май паракан санитари мероприятийĕсене анлăн пурнăçа кĕртсе пыма çул уçса пачĕ. Совет влаçĕн çулĕсенче пирĕн çĕршыври халăхсен сывлăхĕ нумай çирĕпленчĕ, ерекен чирсемпе халăх йышлăн чирлесси тата вилесси чакрĕ. ССР Союзĕнче вăл шутра Чăваш республикинче те холера тата чечче чирĕсене пуçĕпех пĕтернĕ. Вар-хырăм тифĕпе чирлекенсен шучĕ нумай чакрĕ. 1921 çулта вар-хырăм тифĕпе 1104 çын чирленĕ пулсан, 1944 çулта 98 çын кăна чирленĕ; 1921 çулта дизентери чирĕпе 7.302 çын чирленĕ пулсан, 1944 çулта—177 çын кăна чирленĕ; маляри чирĕпе 1921 çулта 15.527 çын чирленĕ пулсан, 1944 çулта —9.910 çын чирленĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Чăваш республикине фронт çывăхĕнчи районсенчен халăх нумай куçса килнĕ пулин те, эпир санитари тĕлĕшпе халăха сыхă тытса усрама пултартăмăр. Çакă вăл тĕрлĕ чир-чĕрсем сарăлассинчен малтанах сыхланас ĕçе хуласемпе ялсенчи партипе совет общественноçĕ анлăн хутшăнса пынинчен килчĕ.

Революцииченхи Российăра, уйрăмах «вакă халăхсем» хушшинче, туберкулез чирĕ анлăн сарăлнă. 1913 çулта Российăра кашни 10.000 çын пуçне 56 çын туберкулезпа чирлĕ пулнă. Çулсерен туберкулез чирĕпе кăна çур миллион çын ытла вилсе пынă. Туберкулез чирне хирĕç ĕлĕкхи саманара йĕркеллĕ кĕрешмен. Чăваш çĕршывĕнчи халăх хушшинче туберкулез чирĕ ĕлĕкхи саманара, Российăн центрти облаçĕсенчи пек те мар, нумай сарăлнă. Ӳпке туберкулезĕсĕр пуçне, уйрăмах ачасем хушшинче, шăмă туберкулезĕ сарăлнă.

Партипе Совет организацийĕсем тимлĕн тăрăшнине пула, Чăваш республикинче туберкулезпа кĕрешекен учрежденисен йышĕ вăйлăн ӳссе пычĕ. Халĕ пирĕн икĕ тубдиспансер, каçхи санатори, ачасем валли виçĕ санатори, туберкулезран сыватакан 4 пункт ĕçлеççĕ. Туберкулезпа чирлекенсен йышĕ çулран çулах чакса пырать.

Октябрьти Социализмлă аслă революци хĕрарăмăн ĕмĕрхи правасăрлăхне, танмарлăхне пĕтерчĕ. Совет правительстви ача амăшĕпе ачасен сывлăхне сыхлас ĕçе государствăн пĕрремĕш черетре тăракан задачи вырăнне хучĕ. Халăхăн пурнăçĕ лайăхланнине пула, унăн культурăлăхĕ ӳснине пула, ача амăшĕпе ача сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе аплă мероприятисене пурнăçа кĕртсе пынине пула, Совет Союзĕнче ачасем вилесси икĕ хут ытларах чакрĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕ 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче йышăннă историллĕ Указ Совет государстви ача амăшĕпе ачасен сывлăхĕшĕн çулран çул ытларах та тимлĕнрех тăрăшса пынине уçăмлăн кăтартса парать.

Совет хĕрарăмĕ ача амăшĕ пулассинчен хăраса тăмасть, мĕншĕн тесен ку тĕлĕшпе хĕрарăм валли производствăра та, пурнăçра та, сыватакан учрежденисенче те тата ача-пăча учрежденийĕсенче те чи лайăх условисем туса панă. Государство пысăк пулăшу парса тăни ача амăшне хăйĕн пурнăçне общественлă ĕçпе çыхăнтарса пыма май парать. Хальхи Чăваш республики йышăнса тăракан территори çинче революциччен ача амăшĕпе ачасен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен нимĕнле учреждени те пулман пулсан, халĕ ку енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунă. Ача амăшĕсем валли халĕ пирĕн 17 консультаци, 59 акушер пункчĕ, колхозсенче ача çуратмалли 57 çурт ĕçлет, больницăсенчи ача çуратмалли отделенисенче 280 койка пур. Ача-пăча учрежденийĕсен йышĕ те çак çулсенче нумай ӳсрĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн хуласемпе ялсенче ялан ĕçлекен 44 ясли пур, вĕсенче 2730 койка вырнаçса тăрать. 1937 çулта ачасен санаторийĕсенче 30 койка пулнă пулсан, халĕ 330 койка пур, çав çултах сезонлăха уçакан яслисем 582 пулнă пулсан, халĕ вара 684 ясли ĕçлет, вĕсенче 42.000 ача усранать.

Çак мероприятисем пурте ĕнтĕ пирĕн партипе правительство, пирĕн çулпуçăмăр Сталин юлташ ача амăшĕсемпе ачасен сывлăхĕшĕн тимлĕн тăрăшнине уçăмлăн кăтартса парать. Ачаллă хĕрарăм халĕ ĕнтĕ кирек-мĕнле ĕçре те прĕклĕн ĕçлеме, хăйсен ачисене çитĕнтерсе пынипе пĕрлех паттăрла ĕçсем тума пултарать.

Патша саманинче халăх тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлĕхре пурăннине пула, чăваш халăхĕ хушшинче ерекен чирсем, уйрăмах трахома вăйлăн сарăлнă. Тĕрлĕ çынсем тĕпчесе палăртнă тăрăх, 1904 çулта чăваш çыннисенчен 80 проценчĕ трахомăпа асапланнă, 1906 çул тĕлне трахомлисен шучĕ 92 процента çити ӳснĕ. Революциччен куç чирĕсемпе кĕрешекен ятарласа тунă учрежденисем пулман, трахомăна хирĕç, тĕрĕссипе, нимĕнле те кĕрешмен. Трахома чăваш халăхĕшĕн çав тери хăрушă инкек пулнă.

Трахомăпа кĕрешес ĕç Чăваш республикинче Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенчех пуçланнă. 1928 çултанпа вара пирĕн республикăра трахомăпа кĕрешес ĕç пĕр çирĕп йĕрке тăрăх пулса пырать. Нумай ялсенче трахом пункчĕсем тата ятарласа куç больницисем организациленĕ, çак ĕçе совет общественноçне анлăн явăçтарса пынă. 1929 çултанпа вара трахом пункчĕсен хисепĕ çулран çул ӳссе пычĕ, трахсестрасен кадрĕсене хатĕрлес ĕç анлăн пулса пычĕ. 1929 çулта 51 трахом пункчĕ пулнă пулсан, халĕ пирĕн 516 трахом пункчĕ ĕçлет. 1929 çултанпа курссенче 1717 трахсестра вĕрентсе кăларнă. 1935 çулта трахсестрасен квалификацине ӳстермелли курс организациленĕ, ун витĕр 558 çын вĕрентсе кăларнă. 1929 çулта больницасенче куç чирĕпе выртмалли койкăсем 125 пулнă пулсан, халĕ пирĕн 520 койка пур.

1933 çулта республикăра Трахом институтне организациленĕ. Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕ Шульпенкова доктор директор пулса тăракан тата Чемолосов профессор научнăй руководитель пулса тăракан Трахом институчĕн коллективĕ трахомăпа кĕрешес ĕçре пысăк пулăшу пачĕ. Вăл кадрсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе паха ĕçсем туса иртерчĕ. 1935 çултанпа унта 85 врач тата медицинăн вăтам работникĕсем 475 çын вĕренсе хăйсен ăсталăхĕсене ӳстернĕ.

Трахом институчĕ ялти медицина работникĕсемпе тăтăшах çыхăну тытса тăрать. Институт работникĕсем ялти работниксене практикăллă пулăшу пама час-часах вырăнсене тухса çӳреççĕ. 1938-мĕшпе 1944-мĕш çулсем хушшинче Трахом институчĕ хăйĕн амбулаторийĕ урлă 308.866 çынна пулăшу панă, куç чирĕпе кунти стационарта 8.050 çын выртса тухнă. Çав вăхăт хушшинчех куç чирĕпе 4.793 çынна операци тунă.

Республикăри партипе совет органĕсем тата пĕтĕм общественность активлăн пулăшса пынипе, сывлăх органĕсем тата республикăри мĕнпур медицина работникĕсем трахомăпа кĕрешес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртерчĕç. Çавна пула, трахома çулран-çул пĕтсе пырать. 1928 çулта трахомлисен шучĕ 47.3 процент пулнă пулсан, 1944 çулта çав хисеп 8 процент кăна юлнă.

Пирĕн республикăра трахомпа кĕрешмелли тата унран сыхланмалли пур майсем те çителĕклĕ. Çав майсемпе туллин усă курса, медицина работникĕсен трахомăна çывăх вăхăтрах пĕтерессишĕн кĕрешмелле.

Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах Хĕрлĕ Хĕрес организацийĕсем Хĕрлĕ Çара, çавăн пекех госпитальсене тата халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен органсене санитари ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе вăйлăн пулăшма тытăнчĕç. Хĕрлĕ Хĕресĕн Облаçри Комитечĕ медицина кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртерне. 1944 çулта кăна медицинăн 2.406 работникне, вĕсенчен медсестрасем пулма 909 çынна, колхозсенчи медсестрасем пулма—265 çынна тата санитари дружиницисем пулма—1232 çынна вĕрентсе хатĕрленĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче çитĕнисенчен 130 пин çын, шкул ачисенчен 68 пин çын ГСО нормисене панă.

Чăваш республикинчи медицина работникĕсем çак иртнĕ 25 çул хушшинче чăваш халăхĕн сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе вăйа хĕрхенмесĕр, чăн-чăн патриотсем пулса ĕçлерĕç, пысăк çитĕнӳсем турĕç. Анчах пирĕн умра татах та пысăкрах задачăсем тăраççĕ-ха. Пирĕн Отечественнăй вăрçă инваличĕсене медицина енчен пулăшу парассине лайăх йĕркелемелле, ача амăшĕсемпе ачасен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе СССР Верховный Совет Президиумĕ 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче йышăннă Указа пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлемелле, трахомăна тĕппипех пĕтермелле, хамăр республикăри халăхăн сывлăхне малалла çирĕплетсе пымалла.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче Чехословаки республикин премьер-министрĕ Зд. Фирлингер господинпа Чехословаки правительстви членĕсен ячĕпе пулса иртнĕ апатлану

Июнĕн 27-мĕшĕнче Кремльте СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче Чехословаки республикин премьер-министрĕ Зд. Фирлингер господинпа Чехословаки правительстви членĕсен ячĕпе апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура çаксем пулнă: Чехословаки республикин премьер-министрĕ Зд. Фирлингер господин, вице-премьер-министр Урсини господин, нации оборонин министрĕ Л. Свобода генерал, тулашри суту-илӳ министрĕ Г. Рипка господин, халăх çутĕç министрĕ Зд. Неедлы профессор, сывлăх министрĕ А. Прохазка господин, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ В. Клементис господин, дивизи генералĕ Лишка, бригада генералĕсем Рессель тата Пика, Я. Гниздо господин тата ыттисем те, çавăн пекех тата Польша вăхăтлăх правительствин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ржимовский господин, маршал Роля-Жимерский, Польшăн Совет Союзĕнчи посолĕ З. Модзелевский господин тата ыттисем те.

Советсем енчен çаксем пулнă: В. М. Молотов, К. Е. Ворошилов, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, А. А. Андреев, А. А. Жданов, Л. П. Берия, Н. С. Хрущев, Г. М. Маленков, Н. М. Шверник, Н. А. Вознесенский, Н. А. Булганин, А. Н. Косыгин, В. Н. Меркулов, А. Я. Вышинский, арми генералĕ А. И. Антонов, Совет Союзĕн Чехословакири посолĕ В. А. Зорин, арми генералĕ А. В. Хрулев, арми генералĕ А. И. Еременко, бронетанковăй çарсен маршалĕ П. С. Рыбалко, В. В. Кузнецов, Г. М. Попов, Л. З. Мехлис генерал-полковник, Н. М. Молотков генерал-майор тата СССР Наркоминделĕпе Оборона Халăх Комиссариачĕн ответлă сотрудникĕсем.

Апатлану ăшшăн та туслăн пулса иртнĕ.

Пĕрлешнĕ нацисен Сан-Францискăри конференцийĕнче

КОНФЕРЕНЦИН ПĔРЛЕХИ ЛАРĂВĔ ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН УСТАВНЕ ЫРЛАНĂ

САН-ФРАНЦИСКО, июнĕн 26-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Пĕрлешнĕ нацисен Сан-Франциско хулинчи конференцин пĕрлехи ларăвĕ, вырăнти вăхăтпа июнĕн 25-мĕшĕнче 22 сехет те 58 минутра уçăлнăскер, Пĕрлешнĕ нацисен уставне, Пĕтĕм тĕнчери Судăн статутне, хатĕрлекен комисси тăвасси çинчен калакан документа пĕр сасăллăн ырланă. Вăл комисси генеральнăй ассамблейăн малтанхи ларăвĕ пухăначчен ĕçлесе тăмалла.

Ларура председатель пулса ертсе пыраканĕ Пĕрлештернĕ королевствăн делегачĕ Галифакс çапла сĕнӳ панă: конференци ĕçĕсем пĕтĕм тĕнчешĕн историллĕ паллă пырăн йышăнса тăнине пула, яланхи пек алă çĕклесе сасăлас вырăнне, ура çине тăрса сасăлама сĕннĕ. Делегацисен пуçлăхĕсем конференцин юлашки виçĕ документĕсене пĕр сасăллăн йышăннă хыççăн, пĕтĕм делегатсем тата зала пуханнă 2.500 çын ура çине тăрса хĕрӳллĕ алă çупса йышăннă решение саламланă.

Çапла вара пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăха упрамалли организацин никĕсне хуракан устава, Сан-Франциско хулинче 9 эрне хушши тăрăшса ĕçленĕ хыççăн тата нумай эрнесем хушши Думбартон-Оксра ĕçлесе хатĕрленĕ хыççăн тунăскере пĕтĕмĕшпе ырланă. Конференцин юлашки документĕсем вĕсем çине делегатсем алă пусса çирĕплетнĕ хыççăн вăя кĕреççĕ. Устав вара советăн яланхи 5 членĕ тата ун çине алă пуснă ытти государствăсен ытларах пайĕ çирĕплетнĕ хыççăн вăя кĕрет.

Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, устав çине июнĕн 26-мĕшĕнче Сан-Франциско вăхăчĕпе 9 сехетре ирхине алă пусмалла.

Устава ырласа алă пусас умĕн конференцин пĕрлехи ларăвĕнче комиссисен ĕçне пĕтĕçтерес тесе, тăватă комиссин докладне итленĕ. Филиппин делегачĕ Дель-Гадо уставăн пĕтĕмĕшле положенийĕ çинчен калакан 1-мĕш комиссин докладне туса панă; Панамăн президенчĕ пулнă Альфаро Генеральнăй Ассамблея ĕçĕсем тĕлĕшпе ĕçленĕ 2-мĕш комиссин докладне туса панă; Парагвай делегацин пуçлăхĕ Веласкес хăрушсăрлăх совечĕ ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçленĕ 3-мĕш комиссин докладне тунă; Венецуэлăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Парра-Перес суд организацийĕн ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçленĕ 4-мĕш комиссин докладне тунă.

1-мĕш комиссин доклачĕ хыççăн Громыко юлташ сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Пĕрлешнĕ нацисен составĕнчен тухас ыйту пирки Дель Гадо докладне хирĕçленĕ.

Пĕрлехи лару Громыко сĕнĕвне пĕрлехи ларăвĕн протоколне кĕртсе хăварма решени йышăннă. Çавăн хыççăн комисси докладне ырланă. Ытти 3 комиссин доклачĕсене те лару сӳтсе-явмасăрах ырланă.

Ертсе пыракан комитетăн докладчикĕ Куба делегачĕ Бельт хатĕрлекен комисси тăвасси çинчен калакан документа комитет ырлани çинчен пĕлтернĕ. Вăл комисси Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕ тĕнчипех йĕркене кĕрсе çитиччен конференци хыççăн ĕçлесе тăмалла. Пĕрлехи лару çак решение ырланă. Çавăн пекех Бельт ертсе пыракан комитет ырланă резолюцие тăратнă. Çав резолюцире Стеттиниусăн паллă ĕçĕсене, çавăн пекех конференцин ытти виçĕ председательсен ĕçĕсене кĕскен палăртса хăварнă.

Мандат комиссийĕн докладчикĕ Люксембург делегачĕ де-Галле конференцин малтанхи участникĕсене кĕртни çинчен тата каярахпа Аргентина, Белорусси тата Украина делегачĕсене чĕнни çинчен, конференци пынă вăхăтра делегатсен составĕнче пулнă улшăнусем çинчен каласа панă.

Устава тата ытти документсене ырланă хыççăн делегатсем пурте тата залра пулнă çынсем ура çине тăрса темиçе минут хушши алă çупнă. Конференцие организациленĕ державăсен правительствисен ячĕпе Громыко, Стеттиниус, Галифакс тата Ку трибуна çинче пулнă.

САН-ФРАНЦИСКĂРИ КОНФЕРЕНЦИН ЮЛАШКИ ЛАРĂВĔ

Пĕрлешнĕ нацисен уставне алă пусни

САН-ФРАНЦИСКО, июнĕн 26-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Пĕрлешнĕ нацисен Сан-Францискăри конференцин пĕрлехи ларăвĕнче июнĕн 25-мĕшĕнче çĕрле пĕр сасă пулса Пĕрлешнĕ нацисен уставне ырланă. Вара июнĕн 26-мĕшĕнче ирхине Пĕрлешнĕ нацисен уставне алă пусма пуçланă.

Алă пусасси Ветерансен çурчĕн залĕнче пулса иртнĕ. Çав устава делегатсем çаврака пысăк сĕтел хушшине ларса алă пуснă, сĕтел хыçне Пĕрлешнĕ нацисен ялавĕсене çакса тухнă. Çав историллĕ чаплă вăхăта темĕн чухлĕ хаçат, кино тата фото-репортерсем ӳкерсе илнĕ.

Делегатсем икĕ кĕнеке çине алă пуснă: пĕр кĕнеки çине—Пĕрлешнĕ нацисен уставĕн тата Тĕнчери халăхсен Сучĕн статучĕн текстчĕсене çырнă, тепĕр кĕнеки çинче — хатĕрлекен комисси туни çинчен калакан документсем пулнă. Çав икĕ документа та официальнăй тесе йышăннă пилĕк чĕлхепе: акăлчанла, французла, вырăсла, китайла тата испанла пичетленĕ.

«П» саспалли айĕнче алă пусмалли вырăнта Польша валли алă пусмалăх вырăн хăварнă. Алфавит йĕрки тăрăх тусан, устава чи малтан Аргентина алă пусмалла пулнă. Анчах та делегатсем нумайăшĕ мирпе хăрушсăрлăха тытса тăрас тĕлĕшпе тунă организаци çинчен калакан Пĕрлешнĕ нацисен документĕ çине Аргентинăна чи малтан алă пусма ирĕк парассине хирĕç тăнă, мĕншĕн тесен вăрçă вăхăтĕнче Аргентина агрессорсем майлă ĕçсем тунă. Çавăнпа вара çапла йышăннă: Хăрушсăрлăх Совечĕн яланхи членĕсем—аслă державăсем çав документ çине чи малтан алă пусмалла, тенĕ. Çавăнтах тата çакăн пек решени йышăннă: конференцие хăна туса усранă çĕршыв пулса тăракан Пĕрлешӳллĕ Штатсем çав устав çине чи юлашкинчен алă пусмалла, тенĕ.

Устав çине алă пуснă чухне делегаци пуçлăхĕсем çав залра пулнă темиçе çĕр корреспондентсем умĕнче кĕске сăмахсем каланă.

Китай делегачĕсем алă пуснă хыççăн, устав çине Громыко юлташ алă пуснă. Вăл алă пуснă чухне Лăпкă океан вăхăчĕпе шутласан 12 сехет те 13 минут пулнă. Громыко юлташсăр пуçне устава Совет Союзĕ ячĕпе делегаци членĕсем — Голунский, Крылов, Лаврентьев, Новиков, Родионов тата Царапкин юлташсем алă пуснă. СССР делегачĕсем хыççăн устав çине Англи делегачĕсем Галифакс тата Кренборн алă пуснă.

Устав çине Никарагуа делегацийĕ алă пуснă хыççăн алă пусас ĕçе чарнă. Лăпкă океан вăхăчĕпе шутласан 15 сехет те 35 минутра опера залĕнче конференцин юлашки пĕрлехи ларăвĕ питĕ чаплăн уçăлнă. Делегатсем тата пынă халăх мĕнпурĕ 3.000 çын ытла залри пур вырăнсене те йышăнса пĕтернĕ. 50 наци ялавĕсемпе илемлетнĕ трибуна çине хисеплĕ хурал туса тăнă. Трумэн президент, Громыко, Стеттиниус, Галифакс, Веллингтон Ку, Поль-Бонкур тата ыттисем те сăмах тухса каланă. Вĕсен сăмахĕсене радио тăрăх пĕтĕм тĕнчене парса тăнă.

Çак пĕрлехи юлашки лару хыççăн устав çине тата 12 çĕршыв делегацийĕсем алă пуснă, мĕншĕн тесен вĕсем ăна ирхине алă пусма ĕлкĕреймен.

Пĕрлешнĕ нацисен конференцийĕн юлашки ларăвĕнче Трумэн каланă сăмах

САН-ФРАНЦИСКО, июнĕн 26-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Пĕрлешнĕ нацисен конференцийĕн юлашки ларăвĕнче, устав çине алă пуснă чухне тухса каланă сăмахра США президенчĕ Трумэн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен халăхĕ ячĕпе делегатсене вĕсем конференцире тунă ĕçсемшĕн тав туса килĕсене ăнăçлăн таврăнма ырă суннă.

«Эсир,—тенĕ Трумэн, — 9 эрне каярах Сан-Франциско хулине, пĕтĕм тĕнчери мире юратакан халăхсен пысăк шанчăкне тивĕçлĕ пулма пухăнтăр. Вĕсем шанса тăнине эсир тӳрре кăлартăр.

Эсир ăнăçлăх тăвасси çине шанса тăни пурнăçа кĕчĕ. Эсир тин çеç алă пуснă Пĕрлешнĕ нацисен уставĕ çирĕп никĕс пулса тăрать. Çав никĕс çинче эпир лайăхрах тĕнче туса хума пултаратпăр. Европăра çĕнтернĕ хыççăн тата Японие çĕнтериччченхи вăхăтра, тĕнчере пулнă вăрçăсенчен чи хăрушă çак вăрçăра эсир вăрçа хăйне çĕнтертĕр. Шăпах ĕнтĕ çакăн пек устав çине шанса тăни вăрçăн чи хăрушă кунĕсенче хуйăха ӳкнĕ халăхсене хавхалантарса тăма пулăшрĕ. Çак деклараци пĕтĕм тĕнчери халăхсем вăрçăсăр пурăнма май пуррине, мир тытса тăма пулассине шанса тăнине пĕлтерет.

Çакăн пек устав пирĕн темиçе çул каярах пулнă пулсан, пуринчен ытла çак уставпа усă курма ирĕк пулнă пулсан, нумай миллионшар вилнĕ çынсем халĕ чĕрĕ пулнă пулĕччĕç. Малашне çак устава пурнăçа кĕртес кăмăл хуçăлас пулсан, халĕ пурăнакан нумай миллионшар çынсем пĕтмелле пулĕç. Нумайăшĕ кунта: çакă ĕнтĕ нумай пыракан мир тăвас тĕлĕшпе малтанхи утăм пулать, тесе каларĕç. Ку тĕрĕс. Çакă малтанхи утăм кăна пулнине асра тытса, хамăрăн ĕçсене, хамăрăн шухăшсене тĕрĕс тытса пыни паха. Паян эпир лайăх ĕç пуçарса янине çирĕп асра тытса тăрар, хамăрăн тĕп тĕллев çинчен манмасăр малалла пырар».

«Плансем тумалли вăхăт тата ĕçлемелли вăхăт пулать,—тенĕ Трумэн президент.— Халĕ ĕнтĕ ĕçлемелли вăхăт çитрĕ. Çавăнпа та кашни хăйĕн çĕршывĕнче хăйсене тивĕçлĕ методсемпе çак устава халех ырлама, ăна чĕрĕ организм туса хума тăрăштăр. Çак устава эпĕ халех Америка сенатне яма пулатăп. Ман çĕршывăмри халăхăн ытларах пайĕ тата сенатри унăн представителĕсем устава халех çирĕплетессишĕн тăрăшĕç тесе шанатăп».

Малалла Трумэн президент экономика тĕлĕшпе пĕрлешсе ĕçлессин условийĕсемпе задачисем çинчен çапла каланă:

«Çак устав пур чухне тĕнче çакна шанса тăма пултарать: этемлĕх ирĕклĕн, хăйне тивĕçлĕ пурнăçпа пурăнмалли вăхăт килсе çитĕ.

Муссолинипе пĕрле фашизм пĕтĕмпех пĕтсе ларман. Гитлер пĕтнĕ, анчах унăн ухмахла идеологийĕ акнă вăрлăхсем чылай çынсен пуçĕнче упранса пурăнаççĕ. Тирансене пĕтерсе концентраци лагерĕсене аркатса тăкма çăмăлтарах, анчах вĕсене туса вăй панă шухăшсене пĕтерме питех те йывăр. Çапăçу хирĕнче çĕнтерни питĕ паха япала, анчах вăл çителĕклĕ мар-ха. Лайăх тата çирĕп мир туса хурас тесе, пĕтĕм тĕнчери ырă кăмăллă çынсен юлашки 10 çул хушшинче тĕнчере вĕçсе çӳренĕ усала хирĕç кĕрешме хатĕр пулмалла.

Пĕтĕм тĕнчери тиранипе реакци вăйĕсем Пĕрлешнĕ нацисен пĕрлĕхне пĕтерсе хума тăрăшĕç... Анчах Пĕрлешнĕ нацисем пĕрлешсех пурăнĕç тесе калани çире кашнивех килĕшнине пĕлсе тăратăп. Пропаганда тунипе вĕсене Япони паранниччен те, Япони паранна хыççăн та уйăрас çук».

Этемлĕх умĕнче Вудро Вильсон, Рузвельт тата ытти çĕршывсенчи государство деятелĕсен паха ĕçĕсене палăртса, юлашкинчен Трумэн çапла каланă:

«Эсир çырса хунă сăмахсене пурнăçа кĕртсе пырас задача халĕ те çĕршывсенче пирĕн çине тивет. Эсир татăклăн ĕçлесе пырассине вилнисем те, халĕ пурнакансем те тата çуралайманнисем те шанса тăраççĕ. Ирĕклĕ çĕршывсен тивĕçлĕ пурнăçне, культурăллă халăхсен туслă çемьине мир туса парассине шанса тăратăп. Çав мирăн çĕнĕ организацийĕ çирĕп никĕс çинче тăрать. Пĕтĕм тĕнчере ăс пуçпулса тăмалли сăлтава алран ярар мар. Турă пулăшнипе çирĕп тата нумая пыракан мир туса хурар».

Митингсем пысăк çĕкленӳпе иртрĕç

КАНАШ, июнĕн 28-мĕшĕ. **(Телеграмма).** Вагонсем юсакан заводри рабочисем Сталин юлташа «Çĕнтерӳ» орденĕпе наградăлани, Совет Союзĕн Геройĕ ятне тата Совет Союзĕн Генералиссимусĕн ятне пани çинчен калакан Указсене радио тăрăх пысăк хавасланăхпа итлерĕç. Çав ятпа заводри пур цехсенче те митингсем пулса иртрĕç.

Митинг уйрăмăнах шăратакан цехра пысăк çĕкленӳпе иртрĕ. Митингра пурĕ 7 çын тухса каларĕç. Вĕсем пурте хăйсен хĕрӳллĕ сăмахĕсенче СССР Верховный Совет Президиумĕн Сталин юлташа наградăлани, Совет Союзĕн Геройĕ ятне тата Совет Союзĕн Генералиссимусĕн ятне пани çинчен калакан Указĕсене пĕтĕм кăмăлтан ырларĕç. Митингра цехри чи паллă стахановецсем лавральщик Кургаев, формовщик Сопченко, мастер Горшенин юлташсем татăклă обязательствăсем илчĕç.

Цехри рабочисем июнь уйăхĕнчи плана июнĕн 29-мĕшĕ тĕлне тултарма, июль уйăхĕнчи плана 7 процент ирттерсе тултарма обязательствăсем илчĕç.

Çавăн пекех митингсем ытти цехсенче те пысăк активлăхпа иртрĕç. Халĕ завод коллективĕ илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн, Чăваш автономи уявне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

ДМИТРИЕВ.

ТРУМЭН ПРЕЗИДЕНТ СТЕТТИНИУС ВЫРĂНТАН ТУХНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио Лондонри радиопередачик урлă çапла пĕлтернĕ: Трумэн президент США государство секретарĕ Стеттиниус хăй вырăнĕнчен тухма заявлени пани çинчен пĕлтернĕ. Трумэн çапла каланă: Стеттиниус Хăрушсăрлăх Советĕнче Америка представителĕ пулать, çавăн пекех тата вăл халăхсен хăрушсăрлăх организацийĕн генеральнăй ассамблейинче США делегацин пуçлăхĕ пулать, тенĕ. Стеттиниус вырăнне США государство секретарĕ кам пуласси çинчен çитес эрнен малтанхи кунĕсенче пĕлтеретĕп, тенĕ Трумэн президент.

АНГЛИ ПАРЛАМЕНТНЕ СУЙЛАМА КАНДИДАТСЕМ ТĂРАТНИ

ЛОНДОН, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне Англи парламентне суйлама 1.675 кандидат тăратнă. Консерваторсен партийĕ 547 кандидат, лейбористсен партийĕ—601, либералсен партийĕ—305 кандидат тăратнă. Коммон Уэлс партийĕ—22 кандидат, национал-либералсем — 52 кандидат, коммунистсем — 20, независимăйсем—41 кандидат тăратнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ял хуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

КТ 03625 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. 6. 59 42 п. п. Тираж 16.000